

• К.ЭСЛИВАНОВА ХĔРĔСЕМПЕ.

# Вĕсене аслати кĕмсĕртетнĕн алă çупнă

**"Алран кайми", "Ан авăн, шĕшкĕ", "Вĕç, вĕç, куккук", "Пахчи-пахчи", "Çерем пăсса вир акрăм", "Сикĕр, сикĕр шывалла", "Уй варринче", "Хура вăрман витĕр" тата ытти нумай-нумай чăваш халăх юррине илемлетнĕ, чылай кĕвĕ хывнă композитор, фольклорист, чăваш музыкин паллă деятелĕ Степан Максимов халăх культурин историйĕнче паллă вырăн йышăнать. Чăваш юрри-кĕввине кăмăллакансен йышĕнче унăн ятне пĕлмен çын çуках.**

**Степан Максимовичăн малтанхи мăшăрĕ, чăвашсен пирвайхи юрăçи Капитолина Эсливанова пирки те илтнех пулĕ.**

### Шăпчăк та, сар кайăк та

"Чĕмпĕр шкулĕнче ытарайми хитре юрлакансем пурччĕ. Уйрăмах Капитолина Эсливанова сасси питĕ лайăхчĕ. "Пирĕн Капа хăй пĕчченех шăпчăк пек те, сар кайăк пек те юрлать", – теттĕмĕр эпир ун чухне. Эсливанова пек класа ĕненмелле мар ытарайми саслă çынна эпĕ ӳлĕмрен те курман", – аса илнĕ ун пирки чăвашсен малтанхи поэтесси Вăçса Анисçи.

Капитолина Никитична – Шăмăршă хĕрĕ. "Манăн ачалăхăм Сăр тăрăхĕнчи вăрманта иртрĕ. Атте, Никита Савельевич, вăрман хуралçи пулнă май эпир кордонта пурăннă. Пирĕн аттепе аннен вунă ача пулнă. Пурнăç çăмăлах марччĕ..." – тесе çырнă вăл каярах.

Вун икĕ çулта чухне Капăна ашшĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулне илсе каять. Кунта экзамен тытса хĕр ача шкула хатĕрленмелли класра вĕренме тытăнать.

Чĕмпĕр шкулĕнче вăл вăхăтра пултаруллă Иван Дмитриев ĕçленĕ. Таса та янăравлă саслă хĕре вăл часах асăрхать. Ăна хор солистки туса хурать. Çапла Капитолина Никитичнăн музыка биографийĕ пуçланать.

Шкултан Капитолина 1913 çулта вĕренсе тухать. Хыççăнах Иван Яковлев сĕннипе Капа шкул çумĕнчи хĕрарăмсен училищин наставницин пулăшуçи пулса ĕçлеме тытăнать. Унсăр пуçне ĕç хучĕ çине çапла çырать: "Сире чиркӳре юрлама хăнăхтарассине те шанса паратăп. Çавна май сирĕн воспитанниксемпе кунсерен юрламалла, чиркӳре служба пынă вăхăтра хĕрарăмсен хорне йĕркелемелле". Çакă Капитолина юрă-кĕвĕпе тачă çыхăнса ĕçлессине те уçăмланах пĕлтернĕ. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен Ф.Павлов, С.Максимов, И.Максимов-Кошкинскийпе пĕр вăхăтра ăс пухнăскер чăваш хĕрарăмĕсем хушшинче пĕрремĕш хор дирижерĕ, музыка вĕрентекенĕ пулса тăрать.

Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренекенсемпе учительсем Михаил Глинкăн "Иван Сусанин" оперине лартма хатĕрленеççĕ. Кĕтнĕ кун зал тулли халăх пуçтарăнать. Капитолинăн Антонида партине юрламалла. Пĕтĕм чĕререн кулянса хăхлет вăл. "Чăваш хĕрĕ çапла юрлама пултарать-и?", "Чăвашах-и?" – тĕлĕнеççĕ пурте. Чăвашах-мĕн. Темиçе кун иртсен "Симбирянка" хаçатра статья пичетленнĕ: "Оркестрпа хор спектакле çав тери тăрăшса хатĕрленни тĕлĕнтерет... Антонида романсĕ хыççăн залра аслати кĕмсĕртетнĕ пек алă çупни кĕрлесе каfive".

### Палăртман туйăм...

Федор Павлов пĕрле вĕренекен хĕрсен ячĕпе сăвă та шăрçаланă. Вĕсенчен пĕрне, 1910 çулта хайланине, Капитолина халалланă. Нумай çултан вăл хайлав – "Вĕлле хурчĕ" – авторăн паллă юрри пулса тăнă.

Илемлĕ, пултаруллă юрăç тата дирижер юлташĕсемпе ĕçтешĕсем хушшинче палăрман мар паллах. Çавна пулах ăна икĕ тантăш, икĕ вĕрентекен – Степан Максимовпа Федор Павлов – килĕштернĕ. Хĕр вара ытларах пĕрремĕшĕ патне туртăннă.

Федор Павлович Капăна чунтан килĕштернĕ. Анчах йĕкĕт малалла вĕренме ĕмĕтленнĕрен çемье çавăрма васкаман. Вĕри туйăмĕ пирки те калаçу пуçарман. Çак вăхăтра Степан Максимовичăн евчисем хастаррăн ĕçленине пула икĕ çамрăк туй тума калаçса татăлаççĕ.

1913 çулхи çу уйăхĕн 25-мĕшĕнче Чĕмпĕрте çĕнĕ çемье çуралать. Савăнăçлă уява çамрăксен тăванĕсем те, ĕçтешĕсем те, вĕрентекенĕсем те, тусĕсем те пуçтарăнаççĕ. Степăн юлташĕсем хушшинче Федор çеç курăнмасть.

Шкулта вĕренекенсемпе ĕçлекенсем каланă тăрăх, туй умĕн Федор Капăпа тĕл пулса калаçнах-мĕн. Темле сăпайлă пулсан та йĕкĕт: "Йăнăш утăм тăватăн, Степа – мăн кăмăллă. Унпа телейлĕ пулаймăн", – теме хал çитернĕ. Хĕр вара: "Ку манăн ĕç. Кама каяс тетĕп – çавна тухатăп", – тенĕ çеç. Хĕрĕсем ӳссен вара Капитолина Никитична Степан Максимович пирки арçын хăйĕн шухăшĕ çинче çине тăнине каласа кăтартнă. Паллашнă чухне хĕрĕн пулас мăшăрĕ ашшĕне, Никита Савельевича, темпе кăмăлне кайман-ха. Анчах унăн тата темиçе хĕр çитĕннĕ. Тен, çавна пулах арçын хĕрне хирĕçлеме хал çитереймен. Мăн кăмăллă Степана çакă, паллах, кӳрентернĕ. Анчах вăл нăйкăшма хăнăхман, çиллине те ăшĕнче пытарма пултарнă.

Каштахран хĕрарăм хăйне ĕçрен хăтарма ыйту çырать. Çемье çавăрнипе сăлтавлать çакна. 1914 çулти кăрлач уйăхĕнче Максимовсен пĕрремĕш пепке çуралать. Галя ят хураççĕ ăна.

### Виççĕмĕшĕ – юратни, чеелĕхпе палăрни

Вăхăт иртнĕ май Капитолина Никитична хĕрĕсемпе Гальăпа тата Нинăпа Кăнна Кушкине куçать. Хĕрарăм унти шкулта вĕрентекене вырнаçать. Степан Максимович Чĕмпĕрте ĕçлесе пурăнать, хутран-ситрен арăмĕпе ачисем патне килет.

1918 çулхи авăн уйăхĕн 11-мĕшĕнче Капитолина виççĕмĕш хĕр çуратать. Çак вăхăтра çемье пуçĕ килĕнче пулман-ха. Мăшăрĕ ывăл кĕтнине пĕлнĕ хĕрарăм упăшки Кăнна Кушкине таврăннине илтсен килĕнчен тухса тарать. Каярах, Зойăна няня каласа панă тăрăх, Степан Максимович тин çуралнăскерне курсан питех те савăннă. "Мĕнле чипер!" – тет вăл ăна ытарайми пăхса. Кадерка няня каланă тăрăх, ашшĕ Зойăн çара ӳтне чуп тума кăмăлланă. Виççĕмĕшĕ ашшĕн юратнă хĕрĕ шутланнă.

1919 çулхи авăн уйăхĕнче Степан Максимов музыка вĕрентекенне Вăтам Тимĕрçен шкулне куçараççĕ. Кунта вăл çемйипех куçса килет. Малтанлăха шкултах вырнаçтараççĕ вĕсене. Унти пурнăç пирки Максимовсен виççĕмĕш хĕрĕ Зоя акă мĕн аса илет: "Аппасем каласа панă тăрăх, кунта пурăннă чухне анне пĕрре вĕренме кайнă. Атте пирĕнпе пĕчченех юлнă. Пĕтĕмпех кутăн-пуçăн пулса пынă: атте ĕне сунă чухне лешĕ урипе витрене тапнă та пĕтĕм сĕте тăкса янă, хыçалтан йăпшăнса пырса аттене ĕнсинчен автан сăхнă, эпир тепĕр урама ачасемпе выляма туха-туха тарнă. Çакăншăн атте Гальăпа Нинăна вĕлтĕренпе çаптарнă". Зойăна черет çитсен вара хĕр ача ашшĕне кулăшла пулăм каласа кăтартнă. Степан Максимовичăн кăмăлĕ çавраннă.

### "Ан тапалан, ишсе тухаймăн!"

1922 çулта Максимовсен тăваттăмĕш хĕр – Вера – çуралать. Анчах мăшăр ку вăхăта пĕр-пĕринчен сивĕнме тытăнать. Пĕчĕк хĕрĕсене пĕччен пăхакан, кил-хуçалăхне йĕркелекен, çав вăхăтрах вĕрентекенре тăрăшакан хĕрарăмăн упăшкине çителĕклĕ тимлĕх уйăрма вăхăт та çитмен ахăр. Вăл та, хăйĕн ĕçне кӳлĕннĕскер, яла сайра килет.

Максимовсем 1922 çул вĕçĕнче уйăлаççĕ. Тимĕрçенти шкул директорĕпе çӳретнĕ çырусенче çакăн пирки акă мĕн калани пур: "Тăваттăмĕш хĕр – Вера – çуралсан упăшкам Степан Максимович йывăр суран турĕ. Вăл мана тăватă хĕрпе пĕччен хăварчĕ. Çырура: "Ан тапалан, ишсе тухаймăн!" – терĕ. Халĕ çамрăк хĕрарăм – пĕчĕк ачаллăскер – мĕн туйма пултарнине хăвăрах шухăшласа пăхăр".

Вăл вăхăтра саккăрти Галя амăшĕ пĕртен пĕр хут хăй çине алă хума шухăшланине те çакăн пек аса илет: "Пӳрт çумĕнчи сад пахчинче уçăлса çӳренĕ вăхăтра пăшал сасси илтрĕм. Пӳрте чупса кĕрсен урайĕнче выртакан аннене куртăм. Хура кофта çинче, кăкăрĕ тĕлĕнче, тем мăкăрланатчĕ, пĕчĕк шăтăк курăнатчĕ... Телее, пуля чĕрине тивмен.

Çулталăкран Максимовсем Чĕмпĕре куçаççĕ. Мăшăрĕпе пĕрле пурăнмасан та Степан Максимович хĕрĕсене юратма пăрахман. Ялан мар пулин те пулăшма тăрăшнă. Тăватă хĕрĕ те музыка пĕлĕвĕ илнĕ.

"Атте – манăн пĕрремĕш музыка вĕрентекенĕ. Тавах, килте пианино пурччĕ. Каярах эпĕ сĕрме купăс калакан аттене аккомпанентлаттăм. Тĕрĕс мар каланă нотăшăн хутран-сиртрен сĕрĕкĕпе пуçран та çапма пултаратчĕ вăл. Атте питĕ çирĕпчĕ, çавăнпах эпир унран хăраттăмăр та", – çырать каярах аса илĕвĕсенче Галина.

Степан Максимович çĕнĕ арăмĕпе – Мария Степановнăпа – Шупашкара пурăнма куçнă чухне аслă хĕрне Гальăна пĕрле илет. Вун пĕрти хĕр ку вăхăтра Чĕмпĕрте чаплă пианистка шутланма та ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Шупашкара çитсен Галя урăх хĕрарăмпа пурăнмаллине пĕлсе чăтăмлăх çитерейместе амăшне çыру урлă пĕлтерет. Капитолина Никитична хĕрне каялла илсе каять.

### Телей – çемьере, ачасенче

Тĕрлĕ сăлтава пула пĕр вăхăт Степан Максимович Капитолина Никитичнăпа тата хĕрĕсемпе çыхăнăва çухатать. Вăхăт иртнĕ май вĕсем каллех тĕл пулаççĕ. Нумай çул курнăçмасăр пурăннă хыççăн тĕл пулсан Степан Максимович ăна çапла калани паллă: "Саншăн савăнатăп. Санăн пурте пур – çемье, ачасем. Эпĕ вара пĕччен юлтăм". Çакăн чухне çеç малтан кашни сăмахне суйласа калаçакан, ытлашши сăмах вакламан Капитолина Никитична ăна çапла хуравлать: "Мĕн патне туртăнтăн – çавна илтĕн!" Çамрăк чухне Федор Павлова хуравланă евĕр пулинех...

### Пултаруллă Галя

Степан Максимовичпа Капитолина Никитичнăн музыка пĕлĕвĕ илнĕ хĕрĕсем пирки калаçнă чухне Галина Степановна пирки сăмах пуçарсан вырăнлă пулĕ. Вăл – чăвашсен пĕрремĕш пианистки.

Ача чухнех музыка енĕпе пултарулăх кăтартнăскер 12 çулта чухне Чĕмпĕрте иртекен концертсене хутшăннă. Итлекенсем Галя пирки: "Чăн-чăн вундеркинд", – тенĕ.

"Манăн музыка пултарулăхĕпе Мускавра вĕренмелле тесе йышăнчĕç", – аса илнĕ Галя. Амăшне çывăх çыннисем пулăшнипех хĕр ача Мускава лекет. Чĕмпĕрте вĕреннĕ ентешĕсем ăна паллă композитор Н.Римский-Корсаков вĕренекенĕ М.Ипполитов-Иванов патне илсе каяççĕ.

"Михаил Михайлович пире питĕ ырă кăмăллă кĕтсе илчĕ. Эпĕ ăна Шопена выляса кăтартрăм. Вăл мана Мускаври Гнесин ячĕллĕ музыка училищине вĕренме кĕме сĕнчĕ".

1935 çулта Галя училище пĕтерсен ашшĕ йĕрĕпе каять – Мускаври консерваторие çул тытать. Степан Максимов çырнă сонатăна фортепьянăпа выляса кăтартать. Паллă пианист Г.Нейгауз профессор чăваш хĕрне хăйĕн класне йышăнать.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче чĕрĕк ĕмĕр ытла Галина Максимова Мускавра паллă пианистка шутланнă. Мосэстрадăпа Мускаври патшалăх филармонинче солист тата концертмейстерта тăрăшнă.

Чăваш Енпе Галина çыхăну епле тытнă-ха? 1929 çултах вун пиллĕкри Галя Чăваш патшалăх хорĕн Мускавра, Чулхулара иртекен концерчĕсенче хутшăнать. 1930 çулхи çулла Галя пысăк концерт ушкăнĕпе /С.Максимов, Ф.Павлов, В.Воробьев тата С.Габер/ республикăри ялсемпе хуласенче çӳрет. 1936-37 çулсенче патшалăх хорĕпе Мускавра тата Ленинградра иртекен концертсене хутшăнать.

Галина Степановнăпа мăшăрĕ Леонид Вениаминович хайланă кĕвĕсем те республикăра сахал мар янăраççĕ. Степан Максимович 100 çул тултарнă тĕле Л.Фейгин симфони оркестрĕ валли "Элеги" çырнă, ăна Шупашкарта янраттарнă. Галина Степановна хăй те кĕвĕленĕ. Вĕсем Шупашкарти музыка училищине упранаççĕ.

### "Пĕччен эпĕ пĕтетĕп..."

Леонид Фейгин композиторпа, сĕрме купăсçăпа Галина 1947 çулта пĕрлешет. Хĕрарăмăн пултаруллă та хастар мăшăрĕ вунă çултах Мускав консерваторийĕн Пысăк залĕнче Виотти концерчĕсене кăтартнă. Виçĕ çултан унтах Мендельсон кĕввине итлеттернĕ. Çĕр-шывăн чи лайăх сĕрме купăсçисенчен пĕри пулнă.

Галинăпа Леонид пĕр чăмăра чăмăртансан сцена çине час-часах иккĕн тухнă.

Шăпах чăваш хĕрне качча илнишĕн хĕпĕртесе те савăнса Л.Фейгин: "Гальăсăр манăн пурнăç пачах урăхла, виçесĕр япăх çулпа кайнă пулĕччĕ ахăртнех", – çырнă аса илӳ кĕнекинче. Чăваш хĕрне юратнăскер çак халăхăн юрри-кĕввине те килĕштернĕ. Симфони оркестрĕ валли хăй те кĕвĕ хайланă.

Европăпа Азин 14 çĕр-шывĕнче, Китайра гастрольсемпе пултарулăхĕпе савăнтарнă Галина Степановна. 1988 çултанпа Маргарита Тэтчер пулăшнипе Лондона пурăнма куçаççĕ.

Телейлĕ пулнă вĕсем. Унран та ытларах пĕр-пĕринсĕр пурăнайман та.

Кашни ир вăранмассерен каллех пĕр-пĕринпе калаçма пултарнишĕн савăннă. Малашлăх пирки сахалрах шухăшлама тăрăшнă – ют çĕр-шывра пĕччен юласси шиклентернĕ. Тăван çĕр-шывра мĕн пулса иртни çеç шухăшлаттарнă. Ывăлĕсемпе калаçни пысăк савăнăç кунĕ. Анчах ку та хушăран хурлантарнă – телефон сӳнтерсенех ачисем çумра пулманнишĕн куляннă. Тепĕр чухне каçсерен аякка кайнишĕн ӳкĕннĕ те хĕрарăм.

Икĕ юратнă чуна пĕр-пĕринчен нихăçан та тунсăх пулман. Май пур таран юнашар нумайрах пурăнма ĕмĕтленнĕ вĕсем.

Галина Степановна 91 çула çитсен /2004 çулта/ çĕре кĕнĕ, мăшăрĕ 2009 çулта çут тĕнчерен уйрăлнă.

**Чăваш наци библиотекин архивĕнчи материалсемпе усă курса Татьяна НАУМОВА хатĕрленĕ.**